33 02 42-44

Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕ

Ача амăшĕпе ача сывлăхне хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен Методцентр

8 VI 42
№ 53

# ВĂХĂТЛĂХА УÇНĂ ЯСЛИ РАБОТНИКĔСЕМ ВАЛЛИ КĂЛАРНĂ ПАМЯТКА

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1942

Отв. по выпуску *И. П. Павлов-Пинер.*
Технический редактор *А. Т. Быков.*

НТ 1201 Подписано к печати 26/V-42 г. Зак. № 264.
Объем 1,0 п. л. Тираж 2.000 экз.

г. Чебоксары, Типография № 1 Управ. полиграфпром.
при СНК ЧАССР.

# 1942 ÇУЛТА КОЛХОЗСЕНЧЕ ВĂХĂТЛĂХА УÇАКАН ЯСЛИ ĔÇĔСЕН ПРИМЕРЛĂ ПЛАНĔ

## I. Администраципе хуçалăх ĕçĕ.

1. Вăхăтлăха уçакан ясли валли уйăрса панă çурта шуратмалла.

2. Ясли йышăнса тăракан участока карта тытса çавăрмалла, йывăççем лартмалла.

3. Ир çитĕнекен пахча çимĕççем лартмалла: кишĕр, сухан, çарăк, редиска, çĕрулми.

4. Çӳп-çапсемпе мăшкăлтăк шывĕсене яслирен инçетерех уйăрса хунă вырăна кăна тăкмалла. (Çӳп-çапсемпе мăшкăлтăк шывĕсене тăкма йывăç ящик тума пулать).

5. Урайсене йĕпетнĕ япаласемпе шăлмалла, пӳрт-çурт ăшчиккине тăтăшах уçăлтармалла, таса тытмалла.

6. Хăйăр тытса усрама ящик тутарас пулать, ачасене выляма 2 — 3 лав хăйăр турттарса пымалла.

## II. Профилактика тата медицина ĕçĕсем.

1. Яслинче ĕçлекен çынсене пурне те медосмотр тумалла, вархырăм тифĕпе дизентерине хирĕç прививка тутармалла. Ясли работникĕсене уйăхра пĕр хут медосмотр пулмалла.

2. Колхозра вăхăтлăха уçакан яслине ямалли ачасене пурне те çырса тухмалла, вĕсем хушшинче хатĕрленӳ ĕçĕсем туса ирттермелле, сăмахран: ачасен сывлăхне пăхса тухас ĕçе организацилемелле, ачасене икĕ ушкăна: аслă тата кĕçĕн ушкăна уйăрмалла.

3. Трахомăпа чирлисене уйрăм шута илмелле, вĕсем валли уйрăм ушкăн тумалла; вĕсене сыватас ĕçе туса пымалла. Пур ачасен сывлăхне те эрнере пĕр хутран кая мар пăхса тухмалла.

4. Варвитти чирĕпе чирленĕ тата вăйсăр ачасене дизентерине хирĕç профилактикăллă прививка тумалла.

5. Ясли çулне çитнĕ ачасене пурне те шатра чирĕнчен прививка тумалла.

6. Сывлăхĕ начар, вăйсăр, рахитлă ачасен сывлăхне уйрăмах хытă асăрхамалла, вĕсем валли туса панă режима пур енчен те пурнăçа çирĕп кĕртсе пырас пулать.

7. Ясли çуртĕнчи кантăксене сеткăпа кармалла, кухняра тата пӳлĕмсенче шăнасене вĕлерекен хут çыпăçтарса тухмалла.

8. Шăрăх вăхăтра ачасене кашни кун шыва кĕртмелле, пӳрт-çурта тăтăшах уçăлтармалла.

9. Варвиттине ернĕ ачасене е ытти чирпе чирленĕ ачасене ытти ачасенчен уйăрмалла, çакăн çинчен çийĕнчех ясли çумне çирĕплетнĕ медработника пĕлтермелле.

### III. Воспитани ĕçĕ.

1. Кун йĕркине тĕрĕс тумалла, пĕчченшерĕн пăхма кирлĕ ачасене уйрăм ушкăна уйăрмалла.

2. Йĕпе-сапа мар кунсенче ачасене апатлантарасси, çывăрттарасси, выляттарасси пĕтĕмпех уçă сывлăшра пулмалла.

3. Ачасен ашшĕ-амăшĕсене пухса калаçусем ирттермелле, вĕсен хăйсен ачисем валли питшăлли, сăмса тутри, таса тряпкăсем парса ямалла.

4. Аслă ушкăнри ачасене эрнере пĕр хут вăрмансене, уйхирсене илсе çӳремелле, ялхуçалăх машинĕсене кăтартмалла.

### IV. Ясли работникĕсен квалификацине хăпартасси тата санитарипе культура ĕçĕ.

1. Яслире ĕçлекен работниксем валли (нянясем, технически работниксем, кухняра ĕçлекенсем) техминимум занятисем ирттермелле.

2. Ачасене пăхакансем хушшинче патронаж тата воспитани ĕçĕсем енĕпе занятисем туса ирттермелле.

3. Ача ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене тăтăшах ирттерсе тăмалла.

4. Яслисем çумĕнче яслисен ĕçĕсене пулăшса тăракан Совет тумалла.

5. Ача амăшĕсен шкулĕ организацилемелле, ача амăшĕсене пухса ачасене апатлантарас, пăхас, воспитани парас тата ача-пăча чирĕсемпе паллаштарас ыйтусем тăрăх занятисем туса ирттермелле.

### АЧА АМĂШĔСЕН МĔН ПĔЛСЕ ТĂМАЛЛА

1. Ачасене ирхине 6 сехетрен пуçласа 7 сехетчен йышăнаççĕ.

2. Амăшĕ хăйĕн ачине ытти ачасем патне яраччен малтан ăна сестрана кăтартать.

3. Температура 37,6 градусран иртнĕ пулсан, ачана яслине йышăнмаççĕ.

4. Ачасем таса тата вĕсен тумтирĕсем те таса пулмалла.

5. Ачасене йышăннă вăхăтра çăкăр, пĕлĕм тата ытти апат таврашĕ пама юрамасть.

6. Ачасем патне вĕсен амăшĕсем ясли пуç-лăхĕ е сестра ирĕк панипе кăна кĕме пулта-раççĕ.

7. Ултă уйăхчен кăкăр ĕмĕртекен ача амăшĕ-сем кăкăр ĕмĕртме сестра е ясли пуçлăхĕ кă-тартса панă паллă вăхăтра кăна пыраççĕ. Вăл вăхăт 10—11 сехет, 1—2 сехет, 4—5 сехет хушшисенче пулмалла.

8. Кăкăр ĕмĕртме пыракан ача амăшĕсен хăй-сен çиелти тумтирĕсене хывмалла, аллисене çумалла.

9. Яслисенчи йĕркесене пăсма юрамасть.

10. Ачасем патĕнчен сестрана чĕнсе илме юрамасть.

11. Ачасене каçхине 8—9 сехет хушшинче килĕсене салатаççĕ.

## КĂКĂР АЧИСЕН УШКĂНĔНЧИ КУЛЛЕНХИ ПРИМЕРЛĂ РЕЖИМ

Ачасене яслине илсе пырасси, малтанхи хут кăкăр ĕмĕртесси . . . . . . . . . 6—7 сех.

Ачасене тумлантарасси, туалет, çывăрма вырттарасси, çывăртасси . . . 7—9,5 „

| | |
|---|---|
| Иккĕмĕш хут кăкăр ĕмĕр-тесси . . . . . . . . . . . . . | 9,5—10 сех. |
| Манеж е кровать çине çакса янă теттесемпе выляттарасси . . . . . | 10—11 " |
| Çывăрма вырттарасси, иккĕмĕш хут çывăртасси . . . . . . . . . | 11—1 " |
| Ачасем вăраннă çемĕн вĕсене виççĕмĕш хут кăкăр ĕмĕртесси . . . | 1—2 " |
| Ачасем хăйсем тĕллĕн е сестра-семпе вылясси . . . . . . . . . . | 2—2,5 " |
| Çывăрма вырттарасси, виççĕмĕш хут çывăртасси . . . . . . . . . . | 2,5—4,5 |
| Тăваттăмĕш хут кăкăр çитересси . . | 4,5—5,5 |
| Манеж е кровать çине çакса янă теттесемпе вылятасси . . . . . . . | 5,5—6,5 |
| Çывăрма вырттарасси, çывăртас-си е киле парса ярасси . . . . . . . | 6,5—8 " |

## КĂКĂР АЧИСЕН УШКĂНĔ ВАЛЛИ КУЛЛЕНХИ РЕЖИМ ТУМАЛЛИ ПĔТĔМĔШЛĔ ПРАВИЛĂСЕМ

Çывăрса тăнă хыççăн ачасене çитереççĕ. Çинĕ хыççăн ыйăха кайиччен ачасем выляççĕ. Вылянă хыççăн çывăрма выртаççĕ, тепре кăкăр париччен çывăраççĕ. Кашни 3 сехетрен çиеççĕ. Пĕр вĕçрен 1,5—2 сехетрен ытла вылямаççĕ, çывăрмаççĕ. Çумăр пулмасан, уçă сывлăшра 2—2,5 сехет çывăраççĕ. 2—3 уйăхри ачасем чи малтан çывăрма выртаççĕ. 10 уйăха çитичченхи ачасем, вĕсене киле 6 сехетре илсе каяççĕ пулсан, яслире 3 хут çывăраççĕ, амăшĕсем кайрантарах пыраççĕ пулсан—4 хут çывăраççĕ.

10 уйăхран пуçласа 1,5 çула çитичченхи ачасене 6 сехетре илсе каяççĕ пулсан, вĕсене кăнтăрла 2 хут çывăратаççĕ, кайрантарах илсе каяççĕ пулсан—3 хут. Кашни 3,5 сехетрен çиеççĕ. Çывăрас умĕн е çывăрса тăрсан чӳлмек çине лараççĕ. Çывăрас умĕн ачасене çумалла. Пĕр вĕçрен 2,5—3 сехет хушши выляса е ярăнса лараççĕ. Вăраннăçемĕн ачасене тăратса пыраççĕ, çитереççĕ.

Чи малтан пĕчĕк ачасене е çывăрасшăн пулнă, нăйшăклакан, выляма пăрахнă ачасене çывăрма вырттараççĕ.

## 1,5—3 ÇУЛТИ АЧАСЕН УШКĂНĔНЧИ КУЛЛЕНХИ ПРИМЕРЛĂ РЕЖИМ

| | |
|---|---|
| Ачасене яслине илсе пырасси . . | 6—7 сех. |
| Тула тухасси, çуса тасатасси . . | 7,5—8 „ |
| Ирхи апат . . . . . . . . . . . | 8—8,5 „ |
| Занятисемпе вăйăсем . . . . . | 8,5—9 „ |
| Уçă сывлăшра çӳретесси е вылятасси . . . . . . . . . . . . . . | 9—12 „ |
| Тула тухасси, шăрăх çанталăкра урисене çуса ярасси, шывпа сапасси, апат çитересси . . . . . . . | 12—12,5 „ |
| Çывăрма вырттарасси, çывăрттарасси . . . . . . . . . . . . . | 12—3 „ |
| Вăранасси, тула тухасси, вăйăсем . . . . . . . . . . . . . . | 3—3,5 „ |
| Аллисене çуса тасатасси, чей ресси . . . . . . . . . . . | 3,5—4 |

Ӳҫӑ сывлӑшра вылятасси, занятисем . . . . . . . . . . . . . 4—7 сех.
Аллисене ҫуса ярасси, каҫхи апат, ачасене киле салатасси . . 7—8 „

## АСЛӐ АЧАСЕН УШКӐНӖНЧИ КУЛЛЕНХИ РЕЖИМА ТУМАЛЛИ ПӖТӖМӖШЛӖ ПРАВИЛАСЕМ

Ачасем кунне пӗр хут ҫывӑраҫҫӗ. 3—4 хут ҫиеҫҫӗ. Харпӑрхӑй тӗллӗн пӗчченех уҫӑлса ҫӳрес е ҫывӑрма выртас умӗн тула тухса кӗреҫҫӗ. Лайӑх ҫанталӑкра кунӗпех тулта ҫӳреҫҫӗ. Икӗ хутран кая мар заняти ирттермелле, пӗр заняти—ларса тумалли, тепри—музыка тӑрӑх е музыкӑсӑр ҫаврӑнусем тумалли. Начар ҫанталӑкра, ачасем уҫӑлма тухмасан, занятисем ытларах тума та юрать.

## ЯСЛИСЕНЧЕ АЧАСЕНЕ ПӐХМАЛЛИ ЙӖРКЕСЕМ

### Ачасене апат ҫитересси.

Ултӑ уйӑхран иртнӗ ачасене, маннӑй кӗрпи пӑтти ҫиме пуҫласан, алӑ ҫинче вырттарарах тытса чей кашӑкӗпе ҫитермелле; вунӑ уйӑхран пуҫласа—лартса ҫитерме те юрать. Апата мӗнле хатӗрленине тутанса пӑхас тесен, ача кашӑкӗпе мар, урӑх кашӑкпа тутанса пӑхмалла. Ачана ҫитерме кашнине уйрӑм тарелка е миска тата пӗчӗк кашӑк памалла. Ҫитерес умӗн ачасен кӑкри умне тутӑр (сӑмса тутри пысӑкӑш) ҫыхмалла, ҫинӗ хыҫҫӑн тутисене шӑлса илмелле.

Кашни ачан уйрăм алшăлли (60 *см* пысăках мар) пулмалла. Аслă группăри ачасене апат çитернĕ чух, сестра кухньăна ан çÿретĕр, ачасем сĕтел хушшинче апат кĕтсе ан ларччăр тесен, апата сĕтел çине хатĕрлесе çитерсен çеç ачасене сĕтел хушшине лартмалла, унсăрăн вĕсем ашкăнма, шавлама тытăнаççĕ. Аслăрах ачасен сестрана пулăшмалла: çăкăр илсе килме, кашăксем валеçме. Çак ĕççене тума ачасем ывăнман тата сестра сĕннисене ирĕккĕн тăваççĕ пулсан çеç хушмалла. Çулталăк çурă тултарнă ачасене çиме хăйсене хăнăхтармалла. Ачасене сĕтел хушшинче ларма ирĕк пултăр, сĕтел ачасен кăкăринчен çÿлĕрех пулмалла мар.

### Ачасен туалечĕ.

Кăкăр ачисен алли-уринчи чĕрнисене касмалла, сăмсисене ваткăпа е çемçе тутăрпа шăлса илмелле. Куçĕсене ваткăпа е çемçе тутăра шывпа йĕпетсе шăлса илмелле (кашни куçне валли уйрăм татăкпа). Аллисене, питкуçĕсене лайăх çумалла, кашни тула тухмассерен ăшă шывпа çумалла. Кашни ачана тирпейленĕ хыççăн сестран хăйĕн аллисене çумалла. Çулла, шăрăх кунсенче, ачасене таз çинче шыва кĕртмелле, тазне кашни ача хыççăнах вĕри шывпа çуса тасатмалла. Ÿт-тир çинче суран пулсан, çав ачасене уйрăм тазра çумалла. Аслăрах çулти ачасене шăрăх çанталăкра апат умĕн лейкăран е кăкшăмран ăшă шывпа сирпĕтмелле

Ачасене сăмса тутрипе шăнкартма вĕрентмелле (ачасене амăшĕсен таса тутăр таткисем парса ямалла). Апат умĕн ачасен аллисене çумалла, çинĕ хыççăн тути-çăварĕсене шăлса илмелле.

### Чўлмек çине лартасси.

8—10 уйăхри ачасем лара пуçласан, вĕсене чўлмек е шăтăк кресло çине лартма тытăнмалла. Аслăрах ачасене çывăрас умĕн чўлмек çине ларма хушмалла. Чўлмек пулмасан, ачасем вылякан вырăнтан инçетререхре уйрăм уборнăй тумалла: унăн тăрăшшĕ 1 метр, сарлакăшĕпе тарăнăшĕ 20—25 сантиметр. Ачасем тула тухнă хыççăн тасамарлăха тăпрапа витмелле. Ачасене уборная пĕчченшерĕн ямалла мар; ачасем тула тухнă чухне унта яланах çитĕннĕ çын астуса тăмалла. Пўрт-çурт таврашĕнче, килхушшине варалама памалла мар.

### Çывăрма вырттарасси.

Çумăр çуман кунсенче ачасене уçă сывлăшра çывăратмалла. Кроватьсене йывăç е çуртйĕр сулхăнне лартса тухмалла. Ачасене сиктерме тата ĕмкĕчсем пама юрамасть. Уçă сывлăшра вĕсем хăйсемех лăпланса çывăрса каяççĕ, тепĕр енчен—сулхăнра шăнасем те сахалрах. Çывăракан ачасен питне витмелле мар. Чи малтан пĕчĕк ачасене çывăратмалла.

## Вăйăсем.

Кăкăр ачисене çывăрман вăхăтра яланах алăра тытмалла мар, вĕсене кровать çине е манежа вырнаçтармалла. Манежа çакăн пек тумалла: икĕ кровать илеççĕ те, вĕсене юнашар вырнаçтарса лартса урисене çыхса хытараççĕ. Варринчи карлăксене илсе хураççĕ. Çак икĕ кроватьрен тунă манежра ачасене выляма, хускалма ирĕк. Манеж тĕлĕнче, çӳлте, ачасене илĕртекен пĕр-пĕр хитре япала: тĕслĕ лента, чечек е шарик çакса ямалла. Шариксене çемçе япаласенчен тумалла. Вĕсем йăмăх хĕрлĕ, кăвак, симĕс т. ыт. тĕслĕ пулмалла.

Аслăрах çулти ачасен çывăрман е апатланман чухне вылямалла. Вылямаллисем çук пулсан, ачасем салхуланаççĕ, çапăçаççĕ, яслине çӳреме юратмаççĕ, унтан тараççĕ. Уяр, ăшă çанталăкра ачасемшĕн хăйăр пит паха вăйă вырăнĕ пулать. Хăйăр тултарма тăвата хăмаран (1,5$\times$1,5 тăршшĕ) ящик тумалла. Унта таса хăйăр тултармалла. Çавăнта ачасем нумайччен хавасланса выляççĕ. Хăйăрпа выляма йывăç кашăксем (аврисем пулмасан та юрать), йывăç чашăксем, туратсем, чечексем, патаксем пулмалла. Вĕсене ачасем хăйăр ăшне чиксе выляççĕ. Çав япаласене шкул ачисем, пионерсем, пуçтарса пама пултараççĕ. Яслисенче йывăç кубиксем пулмалла, вĕсене кашни платник е столяр хатĕрлесе пама пултарать.

#### Йывăç кубиксен калăпăшĕ.

| | | |
|---|---|---|
| Кирпĕч—16 × 9 × 4 см | — 50 | шт. |
| Кубиксем—9 × 9 „ | 30 | „ |
| Икке уйăрнă кирпĕчсем | 20 | „ |
| Тĕрлĕ пысăккăшлĕ | | |
| Фанер хăмасем . . . | 15 | „ |

Тетрадьсем çине журналсенчен, плакатсенчен касса илнĕ ӳкерчĕксем, çулпуçсен сăнĕсем, красноармеецсен, ачасен тата выльăхсен ӳкерчĕкĕсем çыпăçтармалла.

Ачасем вылякан площадкăра пысăк пĕренесем, хăмасем, пĕрене çине хурса ярăнмалли хăмасем пулмалла.

Воспитательницăсен ачасене çăмăл сăвăсем калама, хускалмалли юрăсем юрлама вĕрентмелле. Вăл юрă-сăвăсенчен хăшне-пĕрне çак кĕнекере кăтартса панă.

#### Ачасен çипуçĕ.

Шăрăх çанталăкра ачасен çипуçĕ питĕ çăмăл пулмалла. Арçын ачасене те, хĕрачасене те çара ӳт çине трусик анчах тăхăнтартмалла, сивĕрех çанталăкра трусик çине кофта е платье тăхăнтартмалла. Хĕрачасене, платье тăхăннă пулсан та, йĕм е трусик тăхăнтартмалла.

### АЧАСЕМ ВАЛЛИ КУЛЛЕН АПАТ ХАТĔРЛЕССИ

#### Кĕрпе шӳрпи хатĕрлесси

Кĕрпе шӳрпине врач кăтартса панă кĕрперен çеç пĕçермелле; сăмахран, сĕлĕ кĕрпинчен, урпа кĕрпинчен, перловăй кĕрперен, рис кĕрпинчен.

Кĕрпе шӳрпине çапла пĕçерессĕ: кĕрпене суйлаççĕ, çуса тасатаççĕ, пĕр стакан шыв çине пĕр чей кашăкĕ кĕрпе ярса ăна таса кастрюльре пĕр сехет вĕретеççĕ. Ун хыççăн кĕрпе шывне сăрăхтарса илеççĕ, вара унта пĕçернĕ чухне типсе пĕтнĕ чухлĕ вĕренĕ шыв хушаççĕ.

### Сĕтпе апат пĕçересси.

Врач кăтартнă тăрăх, кĕрпе шӳрпи çине тин сунă чĕр сĕт тата сахăр ямалла, лайăх пăтратмалла та ун хыççăн 5—10 минут хушши вĕретмелле. Сĕтпе хутăштарнă кĕрпе шӳрпине нумай вĕретме тата вĕретнĕ хыççăн кăмакара нумайччен лартма кирлĕ мар: ун пек чухне сĕтри усăллă япаласем сахалланаççĕ çеç. Сĕтпе сахăр ярса вĕретнĕ кĕрпе шӳрпине хăвăрт сивĕтмелле, хăвăрт сивĕнтĕр тесе кастрюле сивĕ шыв çине лартмалла е тула, сивĕ çĕре, илсе тухмалла. Ачана апат çитернĕ чухне кĕрпе шӳрпине пĕрре çитермелĕх çеç тултарса илмелле. Ăна вĕрекен шывра тытнă кĕленче савăта ямалла, ăшăтма ытла вĕриех мар шыва лартмалла. Хатĕрленĕ кĕрпе шӳрпине кашни çитермессерен пĕтĕмпе ăшăтма кирлĕ мар, ун пек ăшăтсан вăл пăсăлма пултарать.

Ачана çитермелли сĕте урăхла майпа та вĕретсе илме пулать: вĕрекен шывра тытнă темиçе пĕчĕк кĕленче илмелле те, вĕсене кĕрпе шӳрпипе чĕр сĕт тултарса лартмалла, унтан сахăр ямалла. Апат кашни кĕленчинче ачана пĕрре çитермелĕх çеç пулмалла. Кĕленчисене

вĕрекен шывра тытнă пробкăпа е ватăпа пăкласа лартмалла, анчах вĕсене ытла хытă пăклама юрамасть, унсăрăн ăшăтнă чухне сывлăш тухманнипе кĕленчисем çурăлса кайма пултараççĕ. Кĕленчесене, кастрюле шыв ярса, унта вырнаçтарса лартмалла. Кастрюльре шыв кĕленчесенчи сĕт таран пулмалла. Кĕленчесем ӳксе ан пĕтчĕр тесе, вĕсен айне тата вĕсен хушшине таса татăксем хумалла. Кун хыççăн кастрюле вут çине лартмалла. Сĕтпе тата сахăрпа хутăштарнă кĕрпе шӳрпине кастрюльри шыв вĕреме тытăннă вăхăтран шутласа 5—10 минут вĕретмелле. Сĕте çапла майпа вĕретнине—стерилизацилесе вĕретни теççĕ. Кун пек вĕретни сĕте тӳрех кастрюле ярса вĕретнинчен лайăхрах, мĕншĕн тесен, кун пек чухне сĕтри усăллă япаласем ытларах сыхланса юлаççĕ. Вĕретнĕ хыççăн сĕтпе хутăштарнă кĕрпе шӳрпине сивĕтме тытăнмалла. Ăна сивĕтес тесен, кастрюльри вĕри шыв вырăнне пĕчĕккĕн сивĕ шыв ярса тăмалла.

Ачана çитермелли сĕте тата сĕтрен пĕçернĕ ытти апата сивĕ çĕрте тытса усрамалла. Сĕте, ытти япала тултарнă кĕленчесене нӳхрепе тухса лартмалла е сив шыв çине ярса лартмалла, шывне тăтăшах улăштарса тăмалла. Нимĕнпе те хутăштарман сĕте те, кĕрпе шӳрпипе хутăштарса вĕретнĕ пекех, вĕретсе стерилизацилемелле.

Ача амăшĕн ачана кун каçиччен çитермелĕх сĕт вĕретсе хатĕрленĕ хыççăн ача пăхма юла-

кансене çак апата ачана мĕнле çитермеллине ăнлантарса памалла. Урăх хĕрарăмран илнĕ кăкăр сĕтне те шăп çакăн пек вĕретсе стерилизацилемелле.

Ачана çитерес умĕн сĕт кĕленчине ытла вĕриех мар шыва лартса ăшăтмалла, унтан таса алăпа кĕленче çине таса ĕмкĕч (соска) тăхăнтармалла.

### Ĕмкĕче тытса усрасси.

Ачана ĕмтерес умĕн ĕмкĕче кашнинчех вĕренĕ шывпа çумалла. Ĕмĕртнĕ хыççăн ăна кĕленче çинчен илмелле те шалтан та, тултан та лайăх çуса тасатмалла, вĕренĕ шыва чиксе кăлармалла, унтан таса пушă стакана хурса, чей чашăккипе витсе лартмалла. Çĕнĕ ĕмкĕче малтан супăньпе çумалла, вара 5 минут хушши вĕрекен шывра тытмалла, 2—3 çĕртен хĕртнĕ йĕппе чиксе шăтармалла.

### Пăтă пĕçерессии.

5 уйăх иртсен ачана сĕтпе пĕçернĕ шĕвĕ пăтă çитерме юрать. Хытă пăтта кун пек ача çиеймест. Пăтта тĕрлĕ кĕрпеерен пĕçерме пулать, анчах малтанхи вăхăтра ачана маннăй кĕрпеерен пĕçернĕ пăтта çеç çитерме юрать.

**Маннăй кĕрпе пăтти.** Лайăх çуса тасатнă кастрюль çине пĕр стакан шыв, пĕр чĕптĕм тăвар ямалла. Шыв вĕресе тухсан, унта 2 чей кашăк маннăй кĕрпе пăтратса ямалла. Унтан кастрюле ытла вăйлах мар çунакан вут çине

тытса, шыв çуррине яхăн вĕресе пĕтичченех пăтратса тăмалла. Шыв çуррине яхăн вĕресе пĕтсен, унта çур стакан чĕр сĕт тата пĕр чей кашăк сахăр песокĕ (е пĕр катăк сахăр) ямалла, вĕреме кĕриччен ялан пăтратса тăмалла. Сивĕтнĕ чухне те яланах пăтратмалла.

Тĕрекленерех панă ачасене (8 уйăхран иртнĕ ачасене) çитерме пăтта хытăрах туса пĕçерме юрать. Хытăрах туса пĕçернĕ чухне пĕр стакан шыв çине пĕр пысăк кашăк кĕрпе ямалла, кĕрпи вĕресе сарăлнă хыççăн пĕр стакан сĕт тата сахăр хушмалла.

Çулталăк тултарнă ачасем валли пĕçернĕ чухне пĕр стакан пăтă çине чей кашăккипе çур кашăк ытларах усламçу яма юрать. Анчах çăвĕ тин уçланăскер пулмалла. Çулталăк тултарнă ачана пĕр стакан пăтă çитермелле.

Маннăй кĕрпе çук пулсан, вир пăтти пĕçерме юрать. Вир пăттине сĕтпе çапла пĕçермелле. Кĕрпене суйласа тасататççĕ, лĕп шывпа çăваççĕ, лайăхрах тасатас тесе ывăç тупанĕ çинче сăтăраççĕ. Кун хыççăн лĕп шывпа тепĕр хут çăваççĕ, юлашкинчен каçпа шўтерме шыв çине лартаççĕ, ирхине ăна çав шывпах пĕçерме тытăнаççĕ. 10 минута яхăн вĕренĕ хыççăн пăтă çине сахăр, тăвар яраççĕ. Унтан пăтта пăтратса кăмакана лартаççĕ, лайăх витсе лартнă хыççăн вăл вара пăспа хăех сарăлать. Çуне пăтта турилкке çине антарсан тин ямалла. Çапла пĕçернĕ пăтта икĕ çултан иртнĕ ачасене çитерме юрать. Икĕ çул тултарман ачасене çитерес

пулсан, вир пăттине икĕ хут вĕтĕ ала витĕр кăлармалла. Вара хытăрах пĕçерне пăтă çине вĕри сĕт, сахăр, тăвар ямалла та, хутăштарса тепĕр хут вĕретмелле. Плита çинчен илнĕ хыççăн, е кăмакаран кăларнă хыççăн çу ямалла.

**Вир пăтти пĕçерме çак япаласем кирлĕ пулаççĕ:**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Вир кĕрпи | 40 гр. | Усламçу— | 2 гр. |
| Сĕт | 150 гр. | Шыв | 200 гр. |
| Сахăр | 8 гр. | тăвар | —тăвар калакан пуличчен |

**Кĕсел пĕçересси.**

Чĕрĕк стакан çырла е сад пахчи çимĕçĕ илсе унта икĕ стакан шыв ямалла, унтан кăмакана лартса вĕретмелле те, çырлине е сад пахчи çимĕçне вĕтĕ ала çине кăларса хумалла, кашăкпа ирсе вĕтĕ ала витĕр каялла çырла шывĕ çине сăрхăнтармалла. Вĕретнĕ хыççăн уйрăм чашăк çине сивĕтнĕ шыв илсе унта пĕр чей кашăк çĕрулми çăнăхĕ ямалла. Кастрюльри шыв вĕреме кĕрсен, унта чей чашăкки çинчи çĕрулми çăнăхне хушмалла. Анчах çăнăхне янă чух яланах пăтратса тăмалла, унсăрăн вăл муклашкаланса ларма пултарать.

Кĕсел лайăхрах, тутлăрах пултăр тесен, ăна çапла пĕçермелле. Тин татнă çырлана е сад пахчи çимĕçне вĕретсе сивĕтнĕ шывпа çуса тасатмалла, унтан ун çине вĕри шыв сапмалла та, шыв юхса сăрхăниччен тăхтаса тăмалла. Çырлине е сад пахчи çимĕçне чашăк çинче ирмелле, шывне вĕрекен шывра тытнă марля витĕр е шалатка пир витĕр пăчăртаса сăрхăнтармалла.

Сăрхăнтарнă хыççăн юлнă çырларан е сад пахчи çимĕçĕнчен çӳлте асăннă пек кĕсел пĕçермелле, сăрхăнтарса кăларнă çырла шывне пиçнĕ кĕсел çине ямалла. Кĕселе хăмла çырлинчен, чие çырлинчен, çĕр çырлинчен, шур çырлинчен, хурăн çырлинчен, хура çырларан, крыжовникран, хура тата хĕрлĕ хурлăханран пĕçерме юрать. Чĕр панулминчен, типĕтнĕ панулминчен, грушăран, сливăран тата ытти япаласенчен те лайăх кĕсел пулать.

### Çĕрулми çăнăхĕ хатĕрлесси.

Çĕрулми çăнăхĕ пулмасан, ăна килтех тума пулать. Çĕрулми çăнăхне çапла тăваççĕ.

Çĕрулмине шуратмалла та лайăх çуса тасатмалла, унтан хырса вĕтетмелле. Хырса вĕтетнĕ çĕрулми çине шыв ямалла, лайăх пăтратса тăрăлма лартмалла. Кун хыççăн шывне тăкмалла та, ун вырăнне çĕнĕрен шыв ямалла, вара татах тăрăлма лартмалла. Çапла кастрюль тĕпне шапшур çăнăх ларичченех шыв ярса тăрăлтармалла. Кун хыççăн çĕрулми çăнăхне кĕсел пĕçернĕ çĕре яма та юрать. Тарелка çине хурса сывлăшра типĕтсен, ку çăнăха нумай вăхăт тытса усрама пулать.

### Нимĕр пĕçересси.

Лайăх çуса тасатнă пахча-çимĕçĕ çине (çĕрулми, çарăк, кишĕр, купăста, кăшкарути, салат, кавăн çине) тăвар шывĕ ямалла, унтан çак çимĕç çемçеличчен вĕретмелле. Вара ăна шывран

кăларса хырса вĕтетсе хумалла. Хырса вĕтетнĕ çимĕçе каялла кастрюле, вĕретнĕ хыççăн юлнă шыва, ямалла. Кастрюле вут çине лартсан, нимĕр шĕвĕрех пултăр тесе, вĕренĕ сĕт хушмалла. Ку нимĕре 7 уйăхран иртнĕ ачасене çитермелле. Унтан аслăрах ачасене çитернĕ чухне (10 уйăхран иртнĕ ачасене çитернĕ чухне) нимĕре усламçу яма юрать.

### Пахча çимĕçĕнчен яшка пĕçересси.

Пахча çимĕçĕнчен яшка пĕçерес пулсан, ăна лайăх çуса тасататтăр те вĕретме лартнă шыв çине ярăççĕ, вара мĕн çемçеличченех вĕретеççĕ. Унтан, хырса вĕтетсе, çав шывах каялла ярăççĕ. Ача миçерине кура яшкана вĕретнĕ сĕт, хăйма е çу ярăççĕ. Аслăрах ачасене (пĕр çултан иртнисене) çитернĕ чух яшкана çăмарта сарри пăтратса яма юрать. Унтах тата маннăй кĕрпе, рис, сĕлĕ кĕрпи е вĕтетнĕ сухари яма пулать.

### Чĕрĕ сĕтек.

Ачасене çырла шывĕпе тĕрлĕ çимĕç сĕтекĕ ĕçтерни пит усăллă. Сăмахран, вĕсене панулми, помидор, кишĕр сĕтекĕ тата хура хурлăхан, хурăн çырли, çĕр çырли, хăмла çырли шывĕ ĕçтермелле. Ку çырласемпе çимĕçсене малтан сивĕ шывпа лайăх çуса тасатмалла, унтан вĕри шывпа сапмалла, ирсе е хырса çемçетнĕ хыççăн вĕрекен шывра тытнă салфетка çине хумалла е пĕчĕк хутаç ăшне ямалла. Вара, çиелтен

пусса, çимĕç сĕтекне е çырла шывне таса стакан çине юхтармалла. Анчах çимĕçсемпе çырлисем тин татнăскерсем пулччĕр тата çĕрĕк анпулччĕр. Çырла шывĕ е тĕрлĕ çимĕç сĕтекĕ тăвас умĕн савăт-сапана тата алсене лайăх çуса тасатмалла.

### Пиçнĕ апата тытса усрасси.

Пиçнĕ апата сивĕ çĕрте тытса усрамалла: нӳхрепре, чăланта, тазри сивĕ шывра (шăрăхра унти шыва кунне темиçе хутчен улăштармалла). Усранă чухне апата пăсăласран тата çӳпçап лекесрен сыхламалла. Ачана унчченех пĕçернĕ апат çитерес пулсан, ăна кастрюльри вĕри шыва лартса ăшăтмалла. Ача апатне тутанса пăхнă чухне мăн çын тытнă кашăка каялла ача апатне чикме, унпа ачана çитерме юрамасть. Ачана апата лайăх çуса тасатнă кашăкпа çеç çитермелле.

---

## ПĔЧĔК АЧАСЕН СĂВВИСЕМ

— Чи-чи кăсия, кăсия,
Шыв кӳрсемччĕ, кăсия.
— Эп хăратăп кашкăртан,
Хăрушă-çке упаран.
— Шыв кӳрсемччĕ, кăсия
Ан хăра эс, кăсия.
Кашкăр халĕ шурлăхра,
Упи кайнă сунара.

Ка-ач, ка-ач, качакин
Лăпăс-лапăс сухалĕ,
Шĕп-шĕвĕркке майраки.
Кăкарам-и хурăнтан,
Кăшт ятлам-и хушăран:
— Çиме çи те çиессе,
Пăрах эсĕ сĕкессе,
Йывăççене ан кышла,
Шур хурăна ан силле!

Ăрик, ăрик, Ăркки тус—
Утать сысна вăрманта;
Симĕс курăк вăл татать,
Кунтă çине пуçтарать.
Ав, кăмака умĕнче,
Анчăк йăва пĕçерет.
Кăски кушак кĕтесре
Сухарисем вĕтетет.
Кушак çури пит çăвать,
Меуклатса çаврăнать.
Ама кушак Асанне
Тетте кĕпе хатĕрлет.
Алка çакнă сар чăххи
Пўрт-çурт шăлса тирпейлет.
Урай шăлса пĕтерчĕ,
Кайса хучĕ шăпăрне:
— Выртах, шăпăр, канса вырт,
Çўп-çап шăлма хатĕр вырт!

Чак! чак! чакакĕ
Пăри пăтти пĕçернĕ,
Пăтти пиçнĕ-пиçменех
Хăнисене чĕнтернĕ.
Шăкăриех хăнисем
Килсе тулчĕç ун патне.
Пĕрне кашăк тыттарать,
Тепĕрне вăл хыптарать
Виççĕмĕшне хăналать...
Хăна тăвать чакак тус.
Пĕрне кăна памарĕ:

— Эсĕ, ак мĕн, пĕчĕк тус,
Кĕрпе те авăртмарăн,
Вутă та татмарăн,
Шывне те тултмарăн,—
Пая та тивĕç пулмарăн.

Тан-тан танлатать,
Урамра сас янăрать.
Кушак çурчĕ ялкăшать.
Кушак куçне чалăртса
Сиксе тухрĕ урама.
Чăххи витре йăтрĕ те
Чупса пычĕ сӳнтерме.

Меук-меук, меукка!
Сиктерес пулать сăпка.
Кăски, кил-ха эс киле,
Кил-ха ача-сиктерме.
Кайран уншăн эп сана
Хăна тăвăп аванах:
Парăп кукăль татăкĕ,
Парăп хăйма, парăп сĕт!

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă.
Уçăлма куян тухать те,
Сунарçи ăна курать, тет,
Пăшалне персе ярать, тет;
Пиф-пиф! тăрст та тăрст!
Палт! йăванать куян тус.

Кукăр-сăмса тăмани,—
Пысăк куçлă кукамн—
Ларать тунката çинче.
Çавăркалать вăл пуçне,
Таплаттарать урипе,
Мăчлаттарать куçĕпе.

Çерем çинче, ир çинче,
Сĕлĕ чĕресĕ патĕнче
Икĕ кăркка тăраççĕ,
Тăрна пăрçи суйлаççĕ.

## Ачасене яслине йышăнни çинчен çырса пымалли кĕнеке

| Йĕрке №№ | Ачан ячĕпе хушамачĕ тата амăшĕн хушамачĕ (урăхла пулсан) | Ача çуралнă вăхăт | Ачана яслине илнĕ вăхăт | Ача ашшĕ-амăшĕ çинчен кăтартакан сведенисем | | Ача яслинчен тухса кайни, мĕнле сăлтавпа | Асăрхаттарнисем |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | Ашшĕ ăçта ĕçлет | Амăшĕ ăçта ĕçлет | | |
| 1. | Андреев Вова | 3.8 41 ç. | 10. V 42 ç. | Сталин ячĕпе тăракан колхоз | | | |
| | | | | Комбайнер | Бригадир | | |
| 2. | Галыгина Нина | | | Сталин ячĕпе тăракан колхоз | | 1942 çулти майăн 15-мĕшĕнче ача площадкине куçарнă | |
| | | | | Колхозник | Колхозница | | |

Группăри ачасене медицина енĕпе пăхасси тата апатлантарасси çинчен çырса пымалли журнал

| Ача ячĕпе хушамачĕ | Апатлантарасси, врач хушнисем |
|---|---|
| Андреев Вова | Виçĕ кун хушши, кунне 2 хутчен, хăлха емелĕ ямалла<br>дата алă пусни |
| Николаев Женя | Час-часах шыв ĕçтермелле, кашни 3,5 сехетрен кăкăр ĕмĕртмелле.<br>Дата алă пусни |

# Ачасем яслине çӳрени çинчен çырса пымалли ведомость.

1942 çулти ______________________________ уйăхĕ

| Йĕрке №№ | Ачан ячĕпе хушамачĕ | Миçе çулта | Дата | 1<br>17 | 2<br>18 | 3<br>19 | 4<br>20 | 5<br>21 | 6<br>22 | 7<br>23 | 8<br>24 | 9<br>25 | 10<br>26 | 11<br>27 | 12<br>28 | 13<br>29 | 14<br>30 | 15<br>31 | 16 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1. | Андреев | 10 уйăхра | | + | + | — | + | + | + | + | + | + | — | + | + | + | + | + | + |
| 2. | Берсенев | 1 ç. та 10 уйăхра | | + | + | — | + | + | + | + | + | Диспепсия | | | + | + | + | + | + |
| 3. | Берсенева | 2 ç. та 1 уйăхра | | + | + | Грипп | | | + | + | + | + | + | + | — | + | + | + | + |
| 4. | Галыгина | 2 ç. та 4 уйăхра | | + | + | — | + | + | + | + | + | + | + | + | — | Ача садне куçарнă | | | |

# ПАМЯТКА
## для ясельных работников

на чувашском языке

**ГОСИЗДАТ ЧУВАШ. АССР**

**Чебоксары—1942**